Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ **1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать**

42 (8708) № ✻ *Юнкун, 2019 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 5-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

Раççейре

А. Николаев ятне панă

Майăн 31-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ В. Путин Раççей аэропорчĕсене, çав шутра Шупашкарти аэропорта та, ятсем парасси çинчен калакан указа алă пуснă.

Чăваш Ен тĕп хулин аэропорчĕ Андриян Николаев летчик-космонавт ятне официаллă майпа тивĕçнĕ.

Республикăра

Акцие 58 пине яхăн çын хутшăннă

Июнĕн 3-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци службисен регионти уйрăмĕсен ертӳçисемпе кашни эрнере пулакан ĕçлĕ планерка ирттернĕ. Канашлура Пĕрремĕш канал «Пĕрремĕш пул!» ыр кăмăллăх акцине региона йĕркелесе ирттернĕ ĕçе пĕтĕмлетнĕ.

Михаил Игнатьев хăйĕн сăмахĕнче федераци шайĕнче иртнĕ мероприятине Пĕрремĕш каналтан 330 çын килсе çитнине палăртнă. Пĕтĕм тĕнчери ачасене хӳтĕлемелли куна палăртса, региона чылай мероприяти пулнине, Чăваш Ен çинчен самай тĕрлĕ кăларăм хатĕрленсе тухнине асăннă вăл. «Музыка Первого» телеканалăн эфирĕнче Шупашкарта Хĕрлĕ тӳремре иртнĕ гала-концерта тӳрĕ эфирта кăтартнă.

Пĕтĕмпе, «Пĕрремĕш пул!» акципе килĕшӳллĕн, 22 мероприяти ирттернĕ. Чăваш Енри Шалти ĕçсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, вĕсене 58 пине яхăн çын хутшăннă.

Хамăр инф.

Ĕçлекенĕн савăнăçĕ тулли

Çурхи ака-суха ĕçĕсем вĕçленнĕ май, хресчен хăй пурнăçланă ĕçсене пĕтĕмлетме акатуйсене пухăнать. Çак уява районта ыттисенчен маларах Ильич ячĕпе хисепленекен тата «Герой» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче ирттерчĕç. Пĕтĕмлетӳре – ĕç хастарĕсене чысласси тĕп вырăнта. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан «Герой» хуçалăхри **(сулахайран сылтăмалла)** Владимир Степановпа Николай Павлов механизаторсем асăннă хуçалăхри çур акире малти ретре пулчĕç. Хастар ĕçченсене район администрацийĕн Хисеп грамотипе чысланине уява тухнисем кăмăлпа йышăнчĕç.

Владимир Георгиевич çур акире çĕр хатĕрленĕ, 20 гектар хĕрлĕ кăшман акнă, ака хыççăнхи уй-хире пусăрăнтарассипе тăрăшнă. Унăн механизатор стажĕ 15 çул пулсан, Николай Витальевичăн техникăпа туслашни 30 çул ытла. Çак тапхăрта вăл тăтăшах ака-сухана хутшăннă. Кăçал та хăйне çирĕплетсе панă ХТЗ – 17221 тракторпа акма çĕр хатĕрлессипе ыттисем умне чăрмав кăларса тăратман.

Хуçалăхăн çур акири ĕçĕ-хĕлĕ тата акатуйĕ пирки хаçатăн 3-мĕш страницинче паллашма пултаратăр.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Паян – Эколог кунĕ

Тавралăхшăн пĕрле тăрăшар

1972 çулта тĕнче промышленноçĕ ытларах аталанса пынă май, ООН Тавралăх кунне паллă тăвассин ыйтăвне çĕкленĕ. Çакă ахальтен мар, экологи тĕлĕшпе ытларах тимлĕх уйăрмалли ыйту çулран-çул çивĕчленсе пыни сисĕннĕ. Предприяти, организаци тата кашни çын çак енĕпе вăхăтра тăрăшмасан экологи хăрушлăхĕ ӳссе пырасси палăрнă.

Пурнăç ыйтнине кура Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Путинăн 2007 çулхи 933 номерлĕ указĕпе килĕшӳллĕн, Эколог кунне ирттерме пуçланă. Асăннă уяв çут çанталăк сыхлавĕн специалисчĕсемшĕн кăна мар, çавăн пекех тавралăх хăтлăхĕшĕн тăрăшакансен уявĕ те, çавăн пекех экологи тĕлĕшпе ытларах тимлемелли кун та шутланать.

Хальхи вăхăта илер-ха, уйрăмах юлашки çулсенче экологи теми çивĕчленсе пынине туятпăр, хамăр чунсăрлăха пула унта та кунта санкциллĕ мар свалкăсем йышланса пынипе тавралăх тасамарланса пырать, вут-кăвара пула вăрман çуннипе унăн лаптăкĕ пĕчĕкленет тата ытти. Çаксем йăлтах – вăхăтра тӳрлетмелли йăнăшсем.

Тавралăх ыйтăвĕ çинче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин хăйĕн çулсеренхи çырăвĕнче те чарăнмасăр иртмерĕ, ку тĕлĕшпе ытларах тимлĕх уйăрма, регионсенче ку енĕпе тĕллевлĕ ĕçлеме сĕнчĕ. Çавăн пекех ку ыйтăва чылай çул хускатманнине палăртрĕ.

Тĕллевлĕ ĕçлесе пынă май, республика Раççей Федерацийĕ шайĕнчи 12 наци проектĕнчен 11-ĕшĕнче, çавăн пекех федерацин 67 проектĕнчен 52-шĕнче хутшăнать. «Экологи» наци проекчĕ те асăннă ĕçхĕл шайĕнче вăя кĕрсе пырать. Вăл «Комплексная система обращения с ТКО», «Оздоровление Волги», «Сохранение лесов», «Чистая вода», «Чистая страна», «Сохранение уникальных водных объектов» регион проекчĕсенчен тăрать. Кашни проекчĕ тавралăх хăтлăхĕпе çыхăннă. Асăннă проект 2024 çулччен пырать.

Чăваш Ен, вăл шутра Муркаш районĕ те, экологи ыйтăвĕпе япăх мар ĕçлесе пырать, санкциллĕ мар свалкăсене тĕп тăвассипе, йывăç-тĕм лартассипе тата ку тĕлĕшри ытти мероприятие туллин пурнăçлать.

Район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн ертӳçи Ольга Тимофеева пĕлтернĕ тăрăх, çӳлерех асăннă ĕç-хĕле тĕпе хурса, кăçалхи апрелĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа майăн 15-мĕшĕччен тавралăха хăтлăх кĕртес, тирпейлес тĕлĕшпе уйăхлăх иртнĕ. Çавна май ял тăрăхĕсен территорийĕсенче 230 субботник йĕркеленĕ, 6000 тĕп йывăç хунавĕ лартнă, 42 çăва çинче тирпейленĕ, 43 палăк юсанă. Асăннă мероприятисенче пĕтĕмпе 4000 ытла çын хутшăннă, пуçарулăхпа палăрнă. Ял тăрăхĕсенче свалкăсем çав-çавах пĕтмен-ха, ку енĕпе кашни çыннăн тӳрĕ чунлă пулмалла.

Çамрăк ăрăва та мĕн ачаран тавралăха упрама вĕрентес тĕлĕшпе шкул тата шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенчи ачасемпе экологи сехечĕсем, экскурсисем, экологи патрулĕсем ирттереççĕ. Вĕсем те йывăç-тĕм лартас, тавралăха тирпейлес ĕçсене активлă хутшăнаççĕ.

Район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçи çынсене, вăл шутра ачасене те, малашне те çакăн пек пуçаруллă пулма, тавралăх хăтлăхĕшĕн пĕрле тăрăшма чĕнсе каларĕ.

Тирпей-илем куç валли кăна мар, сывлăхшăн та пысăк пĕлтерĕшлине манар мар, апла пулсан тавралăха вăхăтра тирпейлесе тăрар.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Июнĕн 5-мĕшĕ – Эколог кунĕ

ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Пĕтĕм тĕнчери тавралăха сыхламалли кун ячĕпе, мĕнпур эколога вара – професси уявĕпе саламлатăп!

Çут çанталăкпа вырăнлă усă курасси, тавралăх хутлăхне тата çут çанталăк пуянлăхне сыхласа упрасси – патшалăхпа обществăн чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕсенчен пĕри.

Чăваш Ен чылай çул ĕнтĕ çĕршыври экологи лару-тăрăвĕ лайăх шайри регионсен шутне кĕрет. Çак çитĕнĕве эпир пĕрлехи ăнăçлă ĕçĕмĕре пула тата тăван çĕре чунтан юратнăран тума пултартăмăр.

Республикăра тавралăх хутлăхне сыхлас сферăра тухăçлă çĕнĕ технологисем, экологи хăрушсăрлăхне ӳстерме тата çут çанталăк пуянлăхĕсене сыхласа упрама пулăшакан пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсем ĕçе кĕреççĕ.

Çывăх вăхăтри ултă çуллăх тапхăрти пирĕн тĕллев – «Экологи» наци проектне пурнăçланă май, республика территорийĕнчи ирĕк памасăр йĕркеленнĕ пĕтĕм çӳп-çап вырăнне пĕтересси, Атăла сыватас енĕпе тумалли ĕçсене пурнăçласси, юханшывсене тасатасси, ĕçмелли шыв пахалăхне лайăхлатасси, симĕс хутлăхсен лаптăкĕсене пысăклатасси.

Пĕлтĕр Питтукасси тата Илпеш ялĕсен çывăхĕнчи çӳп-çап вырăнĕсене йĕркене кĕртессипе çыхăннă ĕçсене вĕçлерĕмĕр. Çапла майпа Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче тата Шупашкар районĕнче пурăнакан çынсемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ çивĕч ыйтăва татса патăмăр, 34 гектар ытла çĕре хуçалăх çаврăнăшне кĕртрĕмĕр.

2015 çултан пуçласа 2019 çулччен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 3 350 яхăн гектарпа танлашакан вăрман лаптăкне чĕртсе тăратнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн вăрмансенче пурăнакан тискер чĕрчунсемпе вĕçен кайăксен шучĕ темиçе хут ӳсрĕ.

Пĕрлехи вăйпа эпир палăртнă пĕтĕм тĕллеве пурнăçлассине, тăван çĕрĕмĕрĕн сайра йышши çут çанталăк пуянлăхне упраса хăварса малалла ӳстерсе пырассине çирĕппĕн шанса тăратăп!

Çут çанталăка типтерлĕн сыхласа упранăшăн тата уншăн ырми-канми тăрăшнăшăн пурсăра та тав тăватăп. Çирĕп сывлăх, ырлăхпа телей, малашнехи çитĕнӳсем тата пуласлăха шанчăклăн пăхма сунатăп!

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.

Йыхрав

Акатуй – июнĕн 8-мĕшĕнче

Кăçалхи Акатуй Лантăш вăрманĕн уçланкинче çитес шăматкун, июнĕн 8-мĕшĕнче, иртет. Акатуйра ĕç çыннисемпе тата хăнасемпе пĕрле районти кăçалхи ака-суха ĕçĕсене пĕтĕмлетсе ĕçре палăрнисене чыслани тĕп самант пулĕ. Муркаш районĕнчи пултарулăх коллективĕсем илемлĕ юрă-ташăпа савăнтарĕç. Ачасем валли тĕрлĕ аттракцион ĕçлĕ. Спортпа туслисем те хăйсене валли киленĕç тупĕç.

Акатуя пурне те 10.00 сехете йыхравлаççĕ.

Çырăнтару – 2019

3224 çын çырăнма ĕлкĕрнĕ

Хаклă вулаканăм!

«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.

Хальлĕхе 3224 çын çырăнма ĕлкĕрнĕ. Вăхăт нумай юлмарĕ, эсир те çырăнма васкăр.

Редакци.

Саламлатпăр

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, аннене, кукамая – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Мария Александровна САВЕЛЬЕВĂНА** паян 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Пире, ачусене, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр. Эсĕ пирĕншĕн ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах. Сана юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр, юрататпăр, хисеплетпĕр. Эсĕ пурришĕн чунтан савăнатпăр, сана хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

Саламлаканĕсем: икĕ хĕрĕ, икĕ кĕрӳшĕ, мăнукĕсем: Денис, Кирилл, Карина, Даниил.

Хаклăран та хаклă, чи юратнă çыннăмăра – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Людмила Всеволодовна РОДИОНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн

саламлатпăр. Сывлăху çирĕп, утас çулу такăр пултăр, шутланисем пурнăçланса пыччăр. Çемьере яланах килĕшӳ, ырă кăмăллăх хуçаланччăр.

Нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăнма Турри вăрăм ĕмĕр пиллетĕр сана. Эсĕ пурăнни – пирĕншĕн телей, чи хаклă пуянлăх.

Ăшă салампа: амăшĕ, мăшăрĕ, ачисем, кинĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.

Поздравляем с 50-летием **Игоря Александровича ВИНОГРАДОВА**. Желаем крепкого здоровья, семейного счастья, больших успехов и долгих лет жизни.

С поздравлением: мама, сестры, родные, родственники и друзья.

Юратнă мăшăра, аннене, кукамая – Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Светлана Николаевна КУЗНЕЦОВĂНА**

55 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, ăнăçу, телей сунатпăр. Ĕмĕтленни пурнăçа кĕрсе пытăр, хуйхă-суйхă пăрăнса ирттĕр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.

Пирĕн юратнă çыннăмăра, хĕвел ăшши пек кăмăллă аннене, ырă кăмăллă хунямана, хаклăран та хаклă кукамая – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Алевтина Леонидовна СКВОРЦОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Уйăх пек çутă кунçул, аслă вăрманта кашласа ларакан юман пек çирĕп сывлăх, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, виçесĕр савăнăç сунатпăр.

Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачи, тăванĕсем.

Тури Тăмлай ялĕнче пурăнакан аннене, кукамая – **Алевтина Григорьевна ХЛЕБНИКОВĂНА** сумлă юбилейпа

– 95 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Иксĕлми вăй-хал, хастарлăх, çирĕп сывлăх, тулăх пурнăç сунатпăр.

Ан ватăл эсĕ, ан чирле,
Куллен хавас утса çӳре,
Ялан пул пирĕнпе пĕрле
Йышра, тулли кĕрекере.
Эс пурри пире савăнтарать,
Пур тăван та сана саламлать,
Сывлăх пултăр мĕн ватăличчен,
Пурăнма сĕнетпĕр 100 çулччен.

Салампа: хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, 6 мăнукĕ, 5 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем, Федотовсен çемйи.

Çавра сĕтел

Пĕрле тăрăшсан ял аталанать

Иртнĕ эрнере Мăн Сĕнтĕр райповĕнче «Потребкооперацин ялсен территорийĕсене аталантарассинчи ролĕ» ятпа çавра сĕтел иртрĕ. Çавра сĕтел ĕçне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Ен ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хутшăнчĕç.

Сергей Артамонов çитес вăхăтра çĕршывра «Развитие села» наци проекчĕ ĕçлеме тытăнассине, ăна валли 6 трлн тенкĕ уйăрма палăртнине пĕлтерчĕ. Республикăра ял хуçалăх таварĕсене туса кăларакансем валли патшалăх пулăшăвĕн пур енне те сыхласа хăварнине палăртрĕ министр. Вăл шутра ăратлă выльăх-чĕрлĕх туяннăшăн та. Сергей Артамонов пĕлтернĕ тăрăх, ăратлă выльăх туянассипе пирĕн республика Атăлçи тăрăхĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнать.

Министр пуçарулăх бюджечĕн программи пурнăçланни çинче чарăнса тăчĕ. Вăл каланă тăрăх, республикăра кăçал 619 проект суйласа илнĕ. «Халĕ вĕсене пурне те вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçлассипе тимлемелле», – палăртрĕ Сергей Артамонов. АПК ветеранĕсене, потребкоопераци ĕçченĕсене ялсене аталанатарассине тӳпе хывнăшăн тав турĕ.

Ялсене аталантарассинче пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе Муркаш районĕнче пурăнакансем те активлă усă кураççĕ. Ростислав Тимофеев кăçал районта 19 проект пурĕ 22 млн ытла тенкĕлĕх пурнăçланасси çинчен пĕлтерчĕ. Вăл шутран 16 проект – ялсенче çулсене юсассипе. Район Шупашкар агломерацине кĕнĕрен, юлашки икĕ çулта «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» федерации программипе пурĕ 5 çул юсанă (вĕсем пĕтĕмĕшле 26 километра яхăн тăршшĕ), 6 шкул çывăхĕнче çул урлă каçмалли вырăнсене йĕркеленĕ. Çак ĕçсене пурнăçлама пурĕ 117 млн тенкĕ ытла тăкаклана.

Кăçал та çулсем юсассипе сахал мар ĕç туса ирттерме палăртнă. «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă автомобиль çулĕсем» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн кăна çулсене юсама 119 млн ытла тенкĕ уйăраççĕ.

Çавра сĕтеле хутшăнакансене Ростислав Тимофеев çавăн пекех районта инвестици проекчĕсене пурнăçлани пирки те каласа пачĕ, ял хуçалăх сферинче умра тăракан задачăсем çинче те чарăнса тăчĕ.

Районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕнче Муркаш районĕнчи Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен тӳписем те палăрăмлине пĕлтерсе район администрацийĕн пуçлăхĕ потребкоопераци ĕçченĕсене тав сăмахĕ каларĕ. Ветерансем те хăй вăхăтĕнче район тата республика аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, халь те активлă пурнăçпа пурăннăшăн хисепе тивĕçлине палăртрĕ.

Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Валерий Павлов юлашки пилĕк çулта кăна потребкоопераци системинче мĕнпур объектран 80 процентĕнче юсав ирттернине, çавăн пекех 140 çĕнĕ объект хута янине палăртрĕ. Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем республикăра кăна мар, çĕршыври Центросоюз тытăмĕнче те чи лайăххисен шутĕнчине каларĕ.

Потребкоопераци тытăмĕнчи пĕрлешӳсем, пирĕн районпа пăхас пулсан та, ял çыннине пысăк пулăшу кӳреççĕ. Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕн председателĕ Людмила Майкова каланă тăрăх, кăçалхи тăватă уйăхра кăна райпо ял хуçалăх предприятийĕсене 420 тонна минераллă удобренипе тивĕçтернĕ, ял çыннисене çуркунне 60 тонна яхăн çĕрулми вăрлăхне сутнă. Килти хушма хуçалăхсенчен сĕт, эмел курăкĕ туянса та райпо çынсене хушма тупăш илме май парать, ял çыннин пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшать. Çапла майпа Мăн Сĕнтĕр райповĕ хăй тивĕçтерекен ялсен аталанăвĕ çине ырă витĕм кӳни куçкĕретех.

Канашлу вĕçĕнче Сергей Артамонов райпосем ялсене аталантарассине пысăк тӳпе хывнине тепĕр хут палăртсах каларĕ, ял хуçалăх ĕçченĕсемпе кооператорсем пĕрле татах та çĕнĕ ӳсĕмсем тума пултарассине палăртрĕ.

Çакна та палăртмасăр иртме çук. Чăваш Енте потребкоопераци системи вăйлă аталаннине юлашки çулсенче пирĕн районта пулса курнă ытти регионсенчи кооператорсен делегацийĕсем те палăртсах каларĕç. «Юмахри пекех пурăнатăр эсир», – терĕç вĕсем.

АПК ветеранĕсен республикăри Канашĕн председателĕ Петр Ивантаев пирĕн республикăра потребкоопераци системине сыхласа хăварни тĕрĕс йышăну пулнине, çакă тата паян райпосем пурнăçпа тан аталанса пыни халăхшăнах лайăх пулнине палăртрĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Пуçарулăх бюджечĕ

Ял халăхне пĕрлештерекен вырăн

Кашни ялта мĕн авалтанах халăх пĕрле пуçтарăннă вырăн пулнă. Хальхи вăхăтра та клуб çук ялсенче шăпах çакăн пек вырăнсенче халăх пухăвĕсене, ял кунĕсене иртереççĕ.

Ильинка ял тăрăхĕнчи Мăн Шашкарта та çакăн пек вырăн пур. Июнĕн 1-мĕшĕнче унта ача-пăча валли спортпа вăйă площадкине уçрĕç. Çак кун мăншашкарсем ачасен уявне ирттернипе пĕрлех ял кунне уявлассине те пуçарса ячĕç.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Марина Соколова ача-пăча площадки малашне ял çыннисене пĕрпĕринпе курса калаçмалли тата вĕсене пĕрлештерекен вырăн пуласса шанать.

– Çак площадкăна ялта пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе туса лартрăмăр. Проект хакĕ 550 пин ытла тенкĕлĕх пулчĕ. Ял халăхĕ çак ĕçе пурнăçлама кам миçе тенкĕ пама пултарчĕ, пачĕ – 100 тенкĕрен пуçласа 2 пин тенкĕ таранах. Нумаях пулмасть ку ялта пурăнма тытăннă А. Кандрашов акă 10 пин тенкĕ пачĕ. Н. Угаслов ертсе пыракан «ТУС» акционер пĕрлешĕвĕ 50 пин тенкĕ хыврĕ. Çапла ял çыннисем 100 ытла пин тенкĕ пухрĕç, ял тăрăхĕн администрацийĕ çавăн чухлех укçа-тенкĕ уйăрчĕ, ыттине республика бюджетĕнчен финансларĕç. Пур çынна та тав сăмахĕ калатăп. Пурте тăрăшрĕç, нумайăшĕ çакăнта тирпей-илем кĕртес ĕçе активлă хутшăнчĕ, – палăртрĕ пуçлăх.

Ĕçе пурнăçлама май килнĕшĕн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ кăна мар, пурте савăннă: ача-пăча площадкинче ачасем те, ашшĕ-амăшĕ те, ватă çынсем те уява пĕрле пуçтарăннă.

Вĕсене саламлама депутатсен район Пухăвĕн депутачĕ Михаил Бычков та çитрĕ (ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе пĕрле вĕсем çак кунах куçкинсене те ял кунĕпе саламланă).

– Марина Соколова ертсе пынипе чăнах та мăншашкарсем пысăк ĕç тума пултарчĕç. Ял тăрăхĕнчи депутатсем, ялти активлă çынсем кунта нумай тăрăшрĕç. Площадкăпа юнашарах футболла выляма вырăн турĕç. Вăрăм сĕтел хушшинче, акă куратăр, шашкăлла тата шахматла вылякансем. Çапла кунта пур ӳсĕмри çыннăн та вăхăта усăллă та интереслĕ ирттерме май пур. Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса çакăн пек паха вырăн йĕркелеме пултарнăшăн эпĕ те сирĕнпе пĕрле савăнатăп, – палăртрĕ вăл хăйĕн сăмахĕнче.

Уяв кунĕнче çамрăксен мини-футбол турнирĕ пуçланчĕ. Чи ăста вылякана депутат укçан хавхалантарассине пĕлтерчĕ.

Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхĕн ертӳçи Владимир Тяпкин вара хăй енчен ятарлă кубок хатĕрленĕ, мăншашкарсене парнелеме кĕнекесем илсе килнĕ. Турник çинче ытларах туртăнакан валли укçан парне хатĕрленине те пĕлтерчĕ.

Уява уяв пек тăвас тесе пурте пĕрле тăрăшаççĕ. Вăрмаккассинчи библиотека ертӳçи Галина Корнеева ачасем валли тĕрлĕ кĕнеке илсе килнĕ. Пулă шӳрпи пĕçерекенсем те хăйсен ĕçне кӳлĕнчĕç. Шкул ачисем кунти сцена çинче пултарулăх концерчĕпе савăнтарчĕç.

Сцена тенĕрен, ăна кунта пулнă клуба сӳтнĕ хыççăн йĕркелесе хăварнă. Унччен кунта шкул вырнаçнă пулнă, маларах – чиркӳ, чиркӳ-прихут шкулĕ.

Çак çурта пăснă чухне никĕс патне çитсен пĕр кĕске пĕрене тата хăма татăкне тупнă. Малтанхи строительсем вĕсем çине çурта 1876 çулта тунине, хыççăн ăна 1972 çулта тĕпрен юсанине çырса хăварнă. Ĕçсене кам пурнăçланине те çав çыруранах пĕлме пулать. Апла пулсан мăншашкарсем хăйсен аслашшĕ-асламăшĕсем ĕмĕртен пухăннă вырăна чĕртсе тăратма пултарнă.

Ялта пурăнакан Валентина Максимова, Галина Князева ача-пăча площадкине тунăшăн питĕ хĕпĕртенĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхне çак ĕçе пуçарма пултарнăшăн, районти ертӳçĕсене тав сăмахĕ каласçĕ.

– Мăн Шашкарта ачасем валли нимĕн те пулман, халĕ ачасемпе çамрăксем кунта çӳреме тытăнчĕç. Вĕсем те, пĕрле килекен ашшĕ-амăшĕсем те пĕрпĕринпе ытларах хутшăнĕç, – теççĕ мăнукĕсемпе пĕрле килнĕ хĕрарăмсем.

Площадкăра тĕрлĕ чуччу, пĕчĕк карусель, ачасен вăйне çирĕплетме пулăшакан ытти хатĕр чылай. Ачасем кашнинех тĕрĕслеççĕ, кашнин çинче ярăнса пăхаççĕ, кулаççĕ, савăнаççĕ. Шăпах çакă ĕнтĕ – аслисемшĕн чи пĕлтерĕшли.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сăн ӳкерчĕксенче: Марина Соколова тата Михаил Бычков несĕлсем хăварнă çыру-па паллаштараççĕ; тахçанах кĕтнĕ карусель çинче.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи акатуйсем

Ĕçлекенĕн савăнăçĕ тулли

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Ака-суха ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленине кура ĕçри паттăрсене тивĕçлипе чыслама халлланă хуçалăхри ĕçпе юрă уявне «Герой» хуçалăх территорине кĕрекен ялсенче пурăнакансем çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче йышлăн пухăнса паллă турĕç. «Ыранхи кунпа пурăнакан хресчен пĕр-пĕрин ĕçне нихăçан та манăça хăвармасть», – пĕтĕмлетрĕм эпĕ Çĕньял Шурча патĕнчи улăхра савăнакан ял çыннисем çине пăхса. Манăça кăларма çеç те мар, шурчасемпе шуркассисем, çĕньялшурчасемпе кӳстерексем ака-суха ĕçĕсене тĕплĕ тишкерсе малашлăха уçăмлатасси те кунта ырă йăлара пулчĕ. Уява пынисен кашнин сăн-питĕнче савăнăç шевли хуçаланнăран, хуçалăх ĕçченĕсем хăйсем умне лартнă çурхи ака-суха ĕçĕсен планне туллин пурнăçланине çирĕплетрĕ. Çавăнпа уява пынисен кашнин сăмахĕнчех çĕр ĕçченне ырă суннине, ĕçре пултарулăхпа палăрнине сума сунине, вĕсен малашлăхне шаннине илтме тӳр килчĕ. Анчах ку йăлтах йĕркипе.

Уява пуçтарăннисене малтанах хуçалăхри çур аки пĕтĕмлетĕвĕпе кооператив председателĕ Галина Иванова паллаштарчĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл хуçалăхри çĕр ĕçченĕсем патшалăх паракан пулăшупа туллин усă курма пултарнине, çак çулпа кайса ӳсĕм тунине палăртрĕ.

– Хамăрăн хуçалăха 1100 гектар çинче аталантарса пыратпăр. Хуçалăх специалисчĕсемпе ĕçченĕсем яланах шыраврa пулнăран тата вĕсем хушнă ĕçе ответлăха туйса пурнăçланăран, ĕçсем кал-кал пурнăçланса пыраççĕ. Кăçалхи çур аки хăйне евĕр интереслĕ иртрĕ. Ака уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех шăнпа усă курса кĕрхи культурăсене апатлантарма тухрăмăр. Хыççăнах нӳрĕк тытса хăвартăмăр. Технологие пăхăнса ĕçленĕренех пулĕ, 309 гектар çинчи кĕрхи тулă таса-сывă упранса юлчĕ. Апла унран тухăç кĕтме пулать, – терĕ Галина Никитична çур акире палăрнă кашни ĕçчене ятран палăртса. – Çур аки вĕçленни çĕр ĕченĕшĕн ял хуçалăхĕнчи чи ответлă ĕçсем пуçланнипе тӳр килет. Умра – «симĕс ĕç çи», хыççăн – кĕрхи ĕçсем т. ыт. те. Мĕн акни-лартнине тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерсе çухатусемсĕр кĕлете пухса кĕртсен çеç эпир хамăр умри тĕллевсене туллин пурнăçларăмăр теме пултаратпăр.

Ырă шанăç кӳрекен çул çинче «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ пĕрремĕш утăм тунă ĕнтĕ. Çакна хăйĕн сăмахĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев та палăртса хăварчĕ.

– Çур аки ăнăçлă иртнипе эсир паян тивĕçлипех мухтанма, савăнма пултаратăр пулсан та, кая хăвармасăр татса памалли ыйтусем те çук мар-ха. Вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре те эсир пĕр çын пек пулса ĕçлессе шанатăп, – терĕ Ростислав Николаевич уява çул парса тата районти ака-суха ĕçĕсемпе паллаштарса.

Ĕç пĕтĕмлетĕвĕсем пирки калас пулсан, хуçалăх кăçал кĕрхи культурăсем çинче ĕçленисĕр пуçне кĕске вăхăтра 279 гектар урпа, 53 гектар çурхи тулă, 20 гектар сĕлĕ, 115 гектар рапс, 20 гектар хĕрлĕ кăшман, 89 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем акса хăварнă. Çурхи уй-хир ĕçĕсем хуçалăхшăн кĕтмен пулăм пулман. Шурчасемпе шуркассисем тата кӳстерексемпе çĕньялшурчасем çурхи уй-хир ĕçĕсене тĕплĕ хатĕрленни ĕçсен хăвăртлăхне çӳллĕ шайра тытма май пачĕ. «Тар юхтарса ĕçлерĕмĕр те халĕ вара тивĕçлипе канма та юрать», – терĕ пĕлĕш механизатор волейболла вылякансем çинчен куçне илмесĕр.

«Герой» хуçалăх – ĕçлесен ĕç пулнине çирĕплетекен тĕслĕх. Малалла пăхса ĕçлекенсен асăннă кооперативран тĕслĕх илмелли çук мар. Кунта ума лартнă тĕллев патне çирĕппĕн утни курăнать. Уйрăм механизаторсенчен илсен, çур акире 6 ака агрегачĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленĕ. Вĕсем: Николай Ефимов, Яков Ефимов, Николай Павлов, Алексей Иванов, Юрий Антонов, Владимир Степанов.

Ака агрегачĕсем патне хире тырă вăрлăхĕ тата минераллă удобрени вăхăтра кăларса тăрассипе Владимир Федоровпа Сергей Алжиров хастар пулнă. Ĕçлекен агрегатсене саппас пайсемпе тата уй-хирте ĕçлекенсене талăкра икĕ хут (кăнтăрлапа каçхине) вĕри апатпа тивĕçтерес ĕçре Михаил Плюхин вăхăтлă ĕçлесе пынă.

Механизаторсемпе водительсен тăрăшулăхне хире вăрлăхпа удобрени кăларакан, сапакан, вăрлăха имçамлакан ĕçченсем те ура хуман.

– Район республика кунне хатĕрленет, çавăнпа алă усса ĕçлеме юрамасть. Республика, Раççей умĕнче пите хĕретес марччĕ. Ку вара – пирĕн пĕрлехи тивĕç. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пур. Çав вăхăтпа ĕлкĕрсе пырсан çеç тупăшлă ĕç пирки каласа пулать. Унтан пуçланать те хуçалăх экономикин тĕрекĕ, ĕçлекенсен ĕç укçи калăпăшĕ. Паян хăвăр акатуйра савăннине пăхатăп та, эсир умри тĕллевсене курнине тата ăнланнине ĕненетĕп. Вăл яланах çапла пултăрччĕ, – терĕ хуçалăх ĕçченĕсене ака-суха ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ ятпа саламласа Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Жуков.

Уявра кашни хастарах чыслама тăрăшрĕç. «Тавах хуçалăх ертӳçисене. Чыслава кура какай шӳрпи те тутлăраххăн туйăнать, ĕçлес хавхалану та ӳсет», – терĕç сцена çинче саламланă хыççăнхи кĕске каласура тăрăшуллă ĕçшĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ Валентина Соловьева складовщицăпа Вера Малеева, Лира Бурцева ĕçченсем.

Сцена çинчи художество пултарулăх коллективĕсен уяв номерĕсене пăхакансене те хамăр артистсен ӳсĕмĕ куç умĕнчех ӳсни савăнтарчĕ.

Акатуй çамрăксем хушшинчи спорт ăмăртăвĕсемсĕр те, ачасем батут çинче вылянисĕр те иртмерĕ. Юнашарах какай шӳрпи, шашлык, ытти суту-илӳ пулни уява пуянлатрĕ кăна.

Пĕр сăмахпа каласан, акатуй хуçалăх ĕçченĕсемшĕн чăн-чăн уяв пулчĕ. Паян вара вĕсем çанă тавăрсах «симĕс ĕç çине» хатĕрленеççĕ.

Анатолий БЕЛОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: çур акире палăрнă водительсем М. Плюхин (сулахайран иккĕмĕшĕ) тата С. Алжиров (сылтăмран иккĕмĕшĕ) ертӳçĕсенчен Хисеп хучĕсене тивĕçрĕç.

Саламлатпăр

Муркашра пурăнакан пирĕн юратнă çыннăмăра – **Людмила Александровна УГЛЕВĂНА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Турă панă кун-çулу вăрăм, сывлăху юман пек çирĕп, йышлă тăванупа килĕштерсе пурăнма яланхи пекех ăшă та таса кăмăл пултăр. Сĕтел çинчен çăкăр-тăвар, кĕрекӳрен тăван ан татăлтăр. Умра яланах çутă кунсем пулччăр. Тавах сана тĕп кил ăшшине тытса тăнишĕн.

Сана хисеплесе те юратса: Углевсен, Михайловсен, Колесниковсен çемйисем.

Эпир юратнă тăхлачăна – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Людмила Всеволодовна РОДИОНОВĂНА** 50 çулхи юбилейпа чĕререн тухакан мĕнпур ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Санăн сывлăху çирĕп, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр. Пурнăç сукмакĕпе пĕр такăнмасăр утма иксĕлми вăй-хал, ытам тулли телей сунатпăр. Яланах хальхи пекех ырă та ăшă кăмăллă пулăр.

Сире хисеплесе те юратса: Углевсен, Михайловсен, Вăрманкассинчи Григорьевсен, Сидоровсен çемйисем.

Хамăр хаклă çыннăмăра – Уйкас Янасал ялĕнче пурăнакан **Владимир Кириллович КИРИЛЛОВА** 80 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр! Ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, 2 хĕрĕпе 2 кĕрӳшĕ, 6 мăнукĕ, пĕчĕк кĕçĕн мăнукĕ Кирилл.

Йыхрав

Форум иртет

Çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕнче «Чебоксары-Арена» Пăр Керменĕнче Чăваш Республикинчи общество канашĕсен форумĕ иртет. Унăн ĕçне ĕç тăвакан органсен тата муниципалитет йĕркелĕвĕсен общество канашĕсен председателĕсене, министерствăсемпе ведомствăсен представителĕсене чĕннĕ.

Форумăн тĕп тĕллевĕ – граждан обществипе тĕрĕслев институчĕсен пĕр-пĕрин хушшинчи эффективлăхне пăхса тухасси, вĕсен эффективлă енĕсене палăртасси, çĕнĕлĕхсем кĕртесси, унăн ĕçне граждансене ытларах явăçтарасси.

Канашлу

Хăрушсăрлăх пирки

Иртнĕ эрнере район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Алексей Матросов хутшăннипе патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн районти тĕп инспекторĕ Сергей Иванов районти çул-йĕре пăхса тăракансемпе тата должноçри çынсемпе ĕçлĕ тĕл пулу ирттернĕ. Сăмах çул-йĕр çинчи инкексене асăрхаттарасси, çавна май çул-йĕр çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессине ятарлă требованисемпе килĕшӳллĕн пурнăçласа пырасси пирки пынă.

Çак канашлăва Муркаш районĕнчи çулсене пăхса тăракан подряд организацийĕсен – «ДЭП-146», «Проксис», «Стройка-21», «Дортех» пĕрлешӳсен – представителĕсемпе ертӳçисем те хутшăннă.

Калаçăва пĕтĕмлетнĕ май, канашлура çулсем тăрăх пĕрлехи рейдсем йĕркелеме, çулйĕр çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессин стандарчĕсене шута илсе ĕçлеме йышăннă. Çавăн пекех районти çулсен паспорчĕсене тăвассипе, çулсем иртекен урамсене тĕрĕслессипе малалла тимлеме палăртнă.

Н. НИКОЛАЕВА.

Район прокуратуринче

Ют пӳрте кĕрсе пурăннă

Юнкăпуç ял тăрăхĕнчи пĕр çамрăк çын ӳсĕр пулнă. Ашшĕ-амăш килĕнче урлă каласу пулнăран, вăл хĕлле çур çĕр варринче килтен тухса кайнă. Хăйпе пĕрле укçа-тенкĕ тата кирлĕ ытти япала таврашĕ илмен, пĕр кĕленче шурă эрехне вара манса хăварман.

Çамрăк çын каланă тăрăх, вăрман тăрăх вăл чылай çапкаланса çӳренĕ. Çапах та шăнса кӳтнĕскер, тăван кил еннелле мар, урăх ял патнелле утнă. Яла çитсен пĕр пӳрте ăшăнма кĕме шухăшланă, картишне пăхса çаврăннă май, унта никам та пурăнманни лайăх курăннă, анчах та алăка уçайманран пӳрте кантăк рами илсе кĕнĕ.

Пӳртре, унăн телейне, кĕрпе, макарон тата хăвăрт хатĕрленекен икĕ стакан çимĕç тупăннă, шалта газ баллонĕ те ларнă. Вĕсем арçынна иккĕмĕш кунне кăна кирлĕ пулнă. Çимĕç хатĕрлеме тата пӳрт ăшăтма тесе вăл газ баллонне пĕр пӳлĕмрен тепĕр пӳлĕме илсе килнĕ. Арçын ют пӳртре виçĕ кун пурăннă, ниçта та тухман, вăхăт ирттерме ăна валли телевизор пулнă.

Ют çын пӳртĕнче пурăннипе кăна çырлахман-ха вăл, хăйпе пĕрле мĕн те пулин илсе тухмалли пурлăха та шырама манман, çенĕкре бензин пăчки тупнă. Ăна эрехпе улăштарас тесе чĕркесе урама тухнă. 5 минут кăна утнă, пĕр арçынна тĕл пулнă та пурлăха пĕр кĕленче эрехле улăштарма сĕннĕ, лешĕ килĕшнĕ.

Çамрăк арçынна ăннă темелле, çав пӳрте каялла кайнă та кăмака хутса ăшăннă, ирхине вара кантăк рамине мĕнле пулнă, çапла лартса хăварса, тухса кайнă. Ашшĕ-амăшĕ ăна шыранине вăл лайăх чухланă, анчах та вĕсен чунне лăплантарма васкаман, ют хуçалăха кĕнине пĕлтерес темен.

Унăн йĕркесĕрлĕхĕ пысăк мар категориллĕ преступлени шутне кĕрет. Ăна лайăх енчен хаклаççĕ, унччен вăл обществăлла йĕркене пăсни пулман. Вăл хăйĕн йăнăшне ăнланса илнĕ, ӳкĕннĕ, çавăн пекех сиен кӳнине саплаштарнă. Суд ларăвĕнче ăна штраф тӳлеттерме йышăннă.

Ю. СЕМЕНОВ, район прокурорĕн çумĕ.

Православи кĕтесĕ

Иисус Христос çӳле çĕкленни

Иисус Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăрсан çĕр çинче тата 40 кун пурăннă. Çав вăхăтра Вăл хăйĕн вĕренекенĕсене курăна-курăна çӳлти патшалăх çинчен вĕрентнĕ. 40-мĕш кунĕнче курăнса Вăл вĕренекенĕсене Елеон тăвĕ çине илсе кайнă. Унтан вĕсене: «Эпĕ сире валли вырăн хатĕрлеме каятăп. Сире тăлăха хăвармăп. Эпĕ Аттене тархаслăп, Вăл сирĕн валли святой сывлăш ярĕ. Вăл сире пур япалана та вĕрентĕ. Вăл Эпĕ сире мĕн каланине пурне те асăра илтерĕ», – тенĕ.

Унтан аллисене çĕклесе вĕренекенĕсене юлашки хут пилленĕ те çӳлелле çĕклене пуçланă. Çӳлех кайсан ăна çутă пĕлĕт хупласа илнĕ те, вăл курăнми пулнă. Вĕренекенĕсем патне икĕ Ангел аннă та çапла каланă: «Çак сирĕн патăртан пĕлĕт çине çĕкленсе кайнă Иисус тепĕр хут та халĕ хăвăр курнă пекех килĕ», – тенĕ.

Çак пулăмпа çыхăннă праçнике чиркӳре Мăнкун иртсен 40-мĕш кунне асăнаççĕ. Кăçал вăл июнĕн 6-мĕшĕнче пулать.

Муркаш районĕнчи Йӳçкасси чиркĕвне çак праçник ячĕпе лартнă.

Администрация Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи в собственность земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, размер земельной доли 35/1793,40 муниципального образования Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по цене, определяемой как произведение 15% кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:061901:1

Заявления принимаются в течение шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская, д.16

* * *

Администрация Большесундырского сельского поселения публикует список невостребованных земельных долей. Указанный список будет размещен также на информационных щитах по территории сельского поселения. Лица, считающие, что они или принадлежащие им земельные доли необоснованно включены в список невостребованных земельных долей, вправе предоставить в письменной форме возражение в администрацию Большесундырского сельского поселения и заявить об этом на общем собрании участников долевой собственности, что является основанием для исключения указанных лиц и(или)земельных долей из списка невостребованных земельных долей. В случае, если общим собранием участников долевой собственности в течение четырех месяцев со дня опубликования указанного списка не будет принято решение по вопросу о невостребованных земельных долях, администрация Большесундырского сельского поселения вправе утвердить такой список самостоятельно.

Список невостребованных земельных долей СХПК «Сундырский» Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 01.06.2019 г.

ФИО долевика	Год рождения	Населенный пункт	Размер земельной доли	
			с/х угодий	в т.ч. пашни
Ивановская Анастасия Георгиевна	1926	Вомбакасы	1,61	1,31
Ивановская Татьяна Ивановна	1936	Вомбакасы	1,61	1,31
Ивановская Татьяна Ивановна	1920	Вомбакасы	1,61	1,31
Галкин Геннадий Тихонович	1931	Кармыши	1,61	1,31
Галкина Нина Алексеевна	1932	Кармыши	1,61	1,31
Краснова Иустиния Андреевна	1927	Кармыши	1,61	1,31
Пихтерова София Константиновна	1910	Малые Татаркасы	1,61	1,31
Игнатьева Евгения Петровна	1936	Кумыркасы	1,61	1,31
Гурьева Мария Гурьевна	1919	Кумыркасы	1,61	1,31
Михайлова Марфа Кузьминична	1912	Новое Шокино	1,61	1,31
Орехов Владимир Ильич	1936	Новое Шокино	1,61	1,31
Голишникова Христина Васильевна	1910	Токшики	1,61	1,31
Голышникова Мария Сергеевна	1909	Токшики	1,61	1,31
Зайцева Евдокия Васильевна	1918	Шупоси	1,61	1,31
Иванова Татьяна Ивановна	1904	Шупоси	1,61	1,31
Назарова Дарья Кирилловна	1925	Шупоси	1,61	1,31
Николаева Анастасия Борисовна	1915	Шупоси	1,61	1,31
Трофимова Мария Климентьевна	1924	Нижние Олгаши	1,61	1,31
Белов Евгений Егорович	1935	Большие Татаркасы	1,61	1,31
Антипова Евдокия Ефремовна	1915	Большие Татаркасы	1,61	1,31
Адамова Фёкла Кузьминична	1913	Большие Татаркасы	1,61	1,31
Блинов Гурий Петрович	1925	Большие Татаркасы	1,61	1,31
Афанасьев Калистрат Филиппович	1946	Большие Татаркасы	1,61	1,31

Лица, считающие, что они или принадлежащие им земельные доли необоснованно включены в список невостребованных земельных долей, вправе предоставить в письменной форме возражение в администрацию сельского поселения по месту расположения земельного участка, находящегося в долевой собственности, и заявить об этом на общем собрании участников долевой собственности. Такое заявление является основанием для исключения указанных лиц и (или) земельных долей из списка.

Администрация Большесундырского сельского поселения.

ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровым инженером Николаевым Андреем Витальевичем, № квалификационного аттестата кадастрового инженера: 21-11-68, от 28.04.2011г., СНИЛС №110-257-732 10, номер регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность 14148, состоящего в некоммерческой саморегулируемой организации Ассоциация «Гильдия Кадастровых Инженеров» №802/10-16 от 13.10.2016г., выполняются кадастровые работы в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:271303:51, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, д. Старые Мадики, ул. Порфирьева.

Заказчиком кадастровых работ являются Васильева Лариса Алексеевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, д. Старые Мадики, ул. Школьная, д 2, кв. 2.

Собрание по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, д. Старые Мадики, ул. Порфирьева, д.14 05.07.2019г. в 10 часов 00 мин.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Чувашская Республика с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 в межевой организации ООО «Аршин».

Требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 05.06.2019г. по 05.07.2019г. обоснованные возражения о местоположении границ земельных участков после ознакомления с проектом межевого плана принимаются с 05.06.2019г. по 05.07.2019г. по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Смежные земельные участки, в отношении местоположения границ которых проводится согласование: кадастровый номер 21:17:271303:19, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, д. Старые Мадики, ул. Порфирьева, д. 14, принадлежащий Васильеву Юрию Николаевичу.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок (часть 12 статьи 39, часть 2 статьи 40 Федерального закона от 24 июля 2007г. №221-ФЗ «О кадастровой деятельности»).

РАБОТА В МОСКВЕ. ВАХТА
Приглашаем работниц на очистку овощей. Проживание, 3-хразовое питание. Оплата – 1000 руб. в день. +7-964-509-61-61. 8-10.

В ООО «БестКерамика» по адресу: с. Моргауши, ул. Восточная, д.1 требуются: стропальщики, сортировщики, загрузчики-выгрузчики, газоэлектросварщик, электромонтеры, слесари-ремонтники, сантехник, разнорабочие, водитель фронтального погрузчика, работники в смену.
Тел. 8(83541)62-3-47. 2-2.

* * *

Строим все – быстро, дешево и с гарантией. Пенсионерам скидки 20%. Тел. 8-919-675-09-46. 2-5.

В транспортную организацию требуются ВОДИТЕЛИ на автобусы марки МАН, НЕОПЛАН, ИВЕКО для работы на межобластных маршрутах. Требования: категория Д, карта тахографа. Тел. 8-917-651-55-38, 8-962-321-33-35. 2-2.

Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çурти электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр. Тел. 8-937-015-35-40. 9-10.

Пластиковые окна REHAU
от 2900 руб./кв. м
• ДВЕРИ межкомнатные/металлические
• натяжные потолки 10-10.
• утепление Пеноизолом, ЭКОВАТА
ЗАМЕР, ДОСТАВКА, УСТАНОВКА.
8-927-844-78-11 Пенсионерам скидки! ИП ПРОКОПЬЕВ С.В.
19-205

ОКНА 3-10.
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ **ДЁШЕВО**
ДВЕРИ -МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ -МЕЖКОМНАТНЫЕ
8-962-599-65-62

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
любой сложности. Подарки. Скидки. Гарантия 10 лет. Тел. 22-95-11, 8-917-078-95-11. 4-10.

ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и другое. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 2-10.

Куплю: КОРОВ, бычков, телок от 1 месяца, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Дорого. Тел. 8-961-345-77-89. 8-33.

* * *

Куплю коров, бычков, телок, молочных телят, баранов. Тел. 8-905-341-69-25. 1-10.

* * *

Закупаем банные веники (береза, дуб), собранные с июня 2019 г. Самовывоз от 400 шт. Оплата при приеме веников: березовые – 30-35 руб/шт., дубовые – 40-50 руб/шт. Стандарты веников сообщаем по телефону. Тел. 8-937-957-12-42. 1-2.

* * *

Куплю КОРОВ на мясо; БЫЧКОВ от 10 дней до 500 кг; ТЕЛОК. Тел. 8-937-951-19-03. 8-33.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-905-197-61-66. 3-10.

* * *

На постоянную работу требуются работники на автомойку (возможно на летнее время). Можно без опыта работы. Обучение. Предоставляется общежитие. В автосервис требуется шиномонтажник с опытом работы. (Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.23, территория сельхозтехники). Тел. 8-927-667-48-08. 1-2.

* * *

Моргаушская ЦРБ Минздрава Чувашии информирует, что имеется возможность трудоустроиться на ФАПы по программе «Земский фельдшер» и получить единовременную выплату в размере 500 тыс. руб. Требования: образование среднее, по специальности «Лечебное дело», «Сестринское дело», «Акушерское дело». Также имеется возможность получить образование по целевому направлению после 9 или 11 классов. Обращаться по тел. 8-8354162780 или 88354162336.

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 6-20.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел. 8-927-667-40-92. 37-47.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 8-10.

Воротынский мясокомбинат закупает: бычков, телок, коров, телят. Цена договорная. Приезжаем сами. Тел. 8-905-193-31-74. 1-4.

Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка. Доставка. Тел. 8-927-857-21-33, 8-937-393-37-07. 13-62.

* * *

Продаю: **Гравмассу, Песок, Керамзит.** НЕДОРОГО. Тел. 8-927-860-98-17. 9-14.

* * *

Песок, щебень (известковый, гранитный), **гравмасса (ОПГС).** Недорого. Доставка. Тел. 8-987-667-42-51. 10-10.

* * *

ПРОДАЮ: гравмассу, песок, бой кирпича, щебень, торф. Доставка. Тел. 8-905-028-22-25. 8-10.

* * *

Продаю: **песок, бой кирпича, гравмассу, щебень, торф.** Доставка. 8-996-949-09-54. 7-20.

* * *

Продаю: **песок, гравмассу, щебень.** Тел. 8-919-650-96-68. 7-10.

* * *

Продаю: песок, щебень, гравмассу, навоз, чернозем, грунт, бой кирпича. Тел. 8-905-198-63-88. 5-11.

* * *

Продаю **чернозем, торф, асфальтную крошку, щебень, гравмассу, песок, бой кирпича и бетона,** вывоз строительного мусора. Тел. 8-917-676-93-79, 8-961-347-25-47. 3-10.

* * *

ПЕСОК РЕЧНОЙ, КАРЬЕРНЫЙ, ГРАВМАССА, БОЙ КИРПИЧА, ЩЕБЕНЬ, ГРУНТ и т.д. Доставка по Моргаушскому району. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 8-10.

* * *

Продаю: автозапчасти для а/м-ны «Нива», сверлильный станок, насос НШ-32, гидрораспределитель, гидрошланги для МТЗ, гидроцилиндры, гидромотор, электромотор (2шт.). Тел. 8-967-794-08-42. 2-5.

* * *

Продаются бычки от 1 до 3 месяцев. Тел. 8-903-359-92-13.

* * *

Продаются: ульи-лежаки на 24-храмные, утепленные, рамы гнездовые, сушь и пустые, медогонка, фляги для хранения меда и другой пчелоинвентарь. Тел. 8-903-064-67-60.

Все виды строительных работ. Дома и бани под ключ, кровля любой сложности. Внутренняя и внешняя отделка, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-865-60-00, 8-987-670-56-78. 5-10.

* * *

Фундамент, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-992-32-42. 5-10.

КРАСКИ, ЭЛЕКТРИКА, ОБОИ, ЛЮСТРЫ. Напротив райбольницы, маг. «Дуэт». Тел. 8-905-343-26-25. 5-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ, ОКНА, ДВЕРИ. Тел. 8-961-346-56-76. 5-10.

КОЛОДЕЗНЫЕ И КАНАЛИЗАЦИОННЫЕ КОЛЬЦА. ПРОДАЖА, ДОСТАВКА, УСТАНОВКА. ТЕЛ. 8-937-953-88-83. 1-10.

Ĕнесем, вăкăрсем, чирленĕ выльăхсем хаклă хакпа туянатпăр. Тел. 8-905-029-63-33. 8-10.

ЗАБОРЫ ИЗ СЕТКИ-РАБИЦЫ, СВАРНОЙ СЕТКИ, ПРОФНАСТИЛА, ЕВРОШТАКЕТНИКА. ВОРОТА, КАЛИТКИ, НАВЕСЫ, КОЗЫРЬКИ. БЛАГОУСТРОЙСТВО ЗАБРОШЕННЫХ УЧАСТКОВ. ПЕНСИОНЕРАМ – СКИДКИ. Тел. 8-937-942-87-85. 1-10.

Прогноз погоды По данным сайта rp5.ru

	Среда				Четверг				Пятница				Суббота			
Местное время	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21	03	09	15	21
Облачность %																
Явления погоды																
Температура	+9	+20	+25	+18	+14	+23	+25	+18	+11	+19	+23	+15	+12	+24	+27	+18
Ощущается	+8															
Давление	753	754	753	752	752	752	751	752	753	755	755	754	754	755	754	753
Ветер	2	6	5	4	4	6	7	4	2	3	3	2	3	4	3	3
		11	12	7	7	11	13	8		7	7			7	8	

Коллектив ООО «Моргауши-Хлеб» выражает глубокое соболезнование пекарю Ландышской хлебопекарни В.М. Павловой по поводу смерти мужа

Михаила Владимировича ПАВЛОВА.

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунти терапи уйрăмĕн ертӳçин, кардиолог врачăн И.Ф. Королькован

АМĂШĔ

вилсе кайнă пирки унăн çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн, тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт. Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38. Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрацилене.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ А.П. Белов
Пичете панă 04.06.2019 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4636.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.